# Икĕ калав

**В. ДАВЫДОВ-АНАТРИ**

*М. ИЛЬИН ӳкерчĕкĕсем.*

## Лантăш

ЭПĔ хулара пурăнатăп. Пĕр-ик уйăх каялла Хăвакля йăмăкăмран çыру илтĕм. Вăл мана хăйсем патне, Мăрат ялне, хăнана пыма чĕннĕ. «Вальăран та салам. Вăл пысăкланчĕ ĕнтĕ, улттă тултарчĕ, килес çул шкула каять», тесе çырнă тата.

Чăнах та, эпĕ çулла Хăвакля йăмăкăм патне кайрăм. Манпа пĕрлеаслă ывăлăм Гена та пычĕ. Ялта пире калама çук тарават кĕтсе илчĕç.

— Валя курăнмасть, ăçта та пулин кайман пулĕ те? — ыйтрăм эпĕ.

— Килтех. Вăл сиртен вăтанать ĕнтĕ, малти пӳлĕме кĕрсе пытанчĕ,— ăнлантарать пире йăмăкăм. Унтан вăл майĕпен малалла утса кайрĕ те:

— Валя, кунталла тух, сана Гена курасшăн. Ун пек пытанни-аван мар,— терĕ.

Пирĕн умма Валя тухса тăчĕ. Куçĕсем хăйĕн çĕмĕрт пек хуп-хура, йăлтăр-йăлтăр çунаççĕ.

Валя ман пата пычĕ, алă пачĕ. Вăл часах Генăна та хăнăхса çитрĕ, эпир ăçта каятпăр, çавăнта пыракан пулчĕ. Ку çеç те мар, Валя пире хăйсен ялĕпе паллашма та пулăшрĕ.

Пĕр кунхине Валя ирех тăчĕ.

— Мĕншĕн вара эсĕ çав тери ир вăраннă? — ыйтрăм эпĕ унран.

— Ыйхă вĕçрĕ,— терĕ Валя. Эпĕ Валя пысăк çын пек чипер калаçма пултарнинчен тĕлĕнсех кайрăм. Нумай та вăхăт иртмерĕ, Гена та вăранчĕ, тумланчĕ, пит-куçне çурĕ. Валя ман пата пычĕ те:

— Ваççа кукка, эпĕ сире чăх фермине, анне ĕçленĕ çĕре, илсе каясшăн,— терĕ. Эпĕ те, Гена та унпа хаваслансах килĕшрĕмĕр.

— Ав, вăл, чăх ферми, инçе те мар, ял çумĕнчех,— пӳрнисемпе тĕллесе кăтартрĕ Валя.

Чăх ферми çав тери илемлĕ вырăнта ларать. Ун çумĕпе пĕчĕк çырма юхса выртать.

— Ку пирĕн Кĕтне çырми ĕнтĕ. Унта эпир шыва кĕретпĕр, пулă та тытатпăр,— ăнлантарса парать пире Валя. Кĕтне икĕ енне те йывăççем лартса тухнă.— Ку йывăççене шкул ачисем, пирĕн Кулясем лартрĕç.

Ферма çуммипе юхса выртакан çырма тĕлне çитсен, эпир Генăпа иксĕмĕр те йăлтах тĕлĕнсе кайрăмăр: Кĕтне туллиех хур-кăвакал! Вĕсем хĕвеллĕ, ăшă кунпа савăнаççĕ-мĕн. Шыв çине шап-шурă мамăк сарса тухнă, тейĕн.

Чăх ферминчен Валя амăшĕ тухрĕ.

— Эсир килни питĕ аван. Атьăр, фермăпа паллашăр, чăх-чĕпсене курăр,— терĕ вăл.

Кунта сар сăмсаллă чĕпсен шучĕ те çук пулĕ! Вĕсем чĕвĕлтетни хăлхана ачашланăн, кăтăкласа илнĕн туйăнать.

— Эпир пĕчĕк чĕпсене малтан чиртлĕхсенче хупса усратпăр. Акă, курăр, кашни пайра аллă чĕпе яхăн. Пурте лайăх çитĕнеççĕ,— тет Валя амăшĕ.

Эпир чăх ферминчен тухрăмăр та ял хĕррипе утса пыратпăр. Сав вăхăтра пирĕн пата пĕр пĕчĕк хĕрача чупса килчĕ. Вăл Вальăна аллинчен ярса тытрĕ те хăлхинчен шăппăн çеç темĕн каларĕ.



— Валя, пире эсĕ тантăшупа мĕншĕн паллаштармастăн, ун ячĕ мĕнле? — ыйтрăм эпĕ.

— Санюк ятлă вăл,— терĕ Валя пире.

Санюк, хăй ятне асăнсан, темшĕн вăтаннă пек пулчĕ, питне хăвăрт кăна саппун вĕçĕпе хупларĕ. Валя кĕтмен çĕртен ман еннелле çаврăнчĕ те:

— Ваççа кукка, эсĕ поэт вĕт, Санюк çинчен сăвă çыр-ха,— терĕ.

Мĕн тăвас тетĕн, намăса юласах килмерĕ, эпĕ вĕсене хам темиçе çул каялла Санюк ятлă пĕчĕк хĕрача çинчен çырнă сăвва вуласа та патăм:

Пирĕн пĕчĕк Санюк пур,
Вăл хăй вара пит маттур:
Ирех тăрать, тумланать,
Питне супăньпе çăвать.

Апат çиет, чей ĕçет,
Хĕрӳ ĕçе пикенет.
Тĕлĕнмелле Санюкран —
Пултаруллă пулнăран...

Çак сăвва илтсен, Санюк та пирĕнпе часах паллашрĕ, хаваслансах калаçма пуçларĕ.

— Халĕ пире ăçта илсе каятăн ĕнтĕ? — ыйтрăмăр эпир Вальăран.

— Халĕ ĕне фермине каятпăр. Унта пирĕн Марине аппа ĕçлет,— тет Валя.

Эпир фермăна пырса кĕнĕ чух Валя аппăшĕ Марине пĕр ула ĕне патне ларнă та тем тăвать. Валя ун патне пынă-пыманах:

— Марине аппа, эсĕ мĕн тăватăн?— тесе ыйтрĕ.

— Ĕнесене сума пуçламалла. Унччен вĕсен çиллисене тасатас тетĕп. Унсăрăн юрамасть. Ĕнесем те тасана юратаççĕ. Çиллисене тасатсан, сĕт те нумай параççĕ,— терĕ пире Марине.

Унччен те пулмарĕ, фермăра пĕр ĕне макăрни илтĕнсе кайрĕ. Марине çавăнтах сиксе тăчĕ те макăракан ĕне патнелле чупса кайрĕ.

— Красотка паян пăру туса парать,— терĕ пире Марине, унтан вăл Валя еннелле çаврăнчĕ те çапла хушса хучĕ: — Эсĕ, Валя, халех выльăх тухтăрĕ патне вĕçтер. Красотка пăруласси çинчен пĕлтер.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, тухтăр перссе те çитрĕ. Вăл хăй шур халат тăхăннă.

— Аптăрани нумай пулать-и?

— Халь çеç-ха. Пĕр-икĕ хутчен макăрса та илчĕ. Паллах, ăна йывăр ĕнтĕ.

Тухтăрпа Марине ĕне патнерех кайрĕç.

— Пăрушĕ те ула, хăй пекех патвар, тына! — терĕ кайран Марине, чунтан савăнса.

Ĕне хăй пăрушĕ çине ăшшăн пăхапăха илет.

— Куратăр-и, ĕне хăй пăрушне мĕнле юратать, çулла-çулла тасатать,— тет тухтăр пире.

Пăртак тăрсан эпир пурте Маринепе пĕрле пăрăва тепĕр витене, пĕчĕк тантăшĕсем патне, илсе кайрăмăр.

— Курăр-ха, курăр, пăру мĕн тăвать! — тесе кăшкăрса ячĕ Валя. Тин çеç тĕнче курнă пăру каçса кайса тапаланать.

— Мĕнле вĕсем патвар, çуралнă-çуралманах ура çине тăраççĕ, утма пуçлаççĕ,— каласа парать пире Марине. Вăл хăй вара çавăнтах пăру валли ăшă сĕт илме чупрĕ. Çав вăхăтра Валя, пăрăва çурăмĕнчен ачашласа тăраканскер, пирĕн еннелле пăхрĕ те:

— Атьăр, пăрăва ят парар. Кам малтан тупать, çав маттур пулать,— терĕ.

Эпир пурте ят шырама пуçларăмăр.

— Миша,— терĕ Гена.

— Миша вăл çын ячĕ. Ун пек аван мар,— хирĕçлерĕ Валя.

— Палан, тесе чĕнес,— сăмах хушрăм эпĕ.

— Ку та килĕшсех каймасть. Палан вăл йўçĕ,— тет Валя.

— Пĕр-пĕр чечек ятне парас,— терĕ Санюк. Вăл çапла çеç калама ĕлкĕрчĕ,— «Лантăш!» тесе кăшкăрса та ячĕ Гена. Çак ят вара пурин кăмăлне те кайрĕ.

— Лайăх ят. Лантăш — çав тери илемлĕ чечек,— терĕмĕр эпир пурте.

## .ЯЛАВ" АЧАСЕМ ВАЛЛИ

# Кĕтмен инкек

Эпĕ пыл хурчĕсене çав тери юрататтăм. Ял çумĕнчи çаран çине тухаттăм та пыл хурчĕсем сĕрленине каçса кайса сăнаттăм. Çак пĕчĕк ылтăн çунатсене курсан, чун уçăлса кайнăн туйăнатчĕ...

Атте эпĕ пыл хурчĕсемшĕн çуннине сисрĕ пулас. Вăл ятарласа кĕçнерни пасарне кайса вĕлле туянчĕ. Ăна çурт çумне, хĕвел тивекен вырăна лартрĕ. Эпĕ иртен пуçласа каçчен унтан уйрăлмастăп: вĕлле хурчĕсем пыл пухнине чун-чĕререн савăнса пăхсаларатăп. Пĕр эрне иртсен, вĕлле пăхма шут тытрăм. Анчах хам çак ĕçе мĕнле, ăçтан пуçламаллине нимĕн те пĕлместĕп. Пирĕн кўршĕре Сахрун Мучи пурăнатчĕ. Вăл пыл хурчĕсем усратчĕ. Ун çинчен таврара ырă ят çўретчĕ. Пурте ăна: Сахрун Мучи — хурт-хăмăр ăсти, тетчĕç. Эпĕ те ăс илме ун патне кайма шутларăм.

Ăна эпĕ хăй патне мĕншĕн килнине йĕркипе каласа патăм.

— Аван, ун пек пулсан, эпĕ мĕн каланине итле,— терĕ Сахрун Мучи. Унтан вăл аллисене выляткаласа илчĕ те: — Çакна ан ман: хуртсем çапкаланнине, рамăсене тирпейсĕр тыткаланине, тĕрлĕ шăршă-марша çав тери юратмаççĕ,— терĕ.

Вĕрентсе ăс панăшăн Сахрун Мучине пĕтĕм кăмăлтан тав турăм та хурт пăхма васкарăм. Киле çитсен, çăм алса тăхăнтăм, пит-куçа ятарласа хурт пăхма тунă алапа хупларăм.

Кунĕ питех те лайăхчĕ. Хĕртсе хĕвел пăхать. Вĕлле хурчĕсем каçса кайса сĕрлеççĕ, пыл пухаççĕ. Эпĕ вĕлле патне хуллен утса пытăм. Хама питĕ лăпкă тытма тăрăшатăп. Пăртак шикленерех вĕлле хуппине сирсе çерем çине хутăм. Пурнăçра пĕрремĕш хут карас рамине кăларма пуçларăм. Пыл хурчĕсем сĕрлеме тытăнчĕç. Темле пулсан та, эпĕ хама çирĕп тытма тăрăшатăп. Анчах ним тума та çук: пыл хурчĕсем мана йăлтах хупăрласа илчĕç.

Эпĕ аптăраса çитрĕм. Унччен те пулмарĕ, сылтăм çанă ăшĕнче пыл хурчĕ сĕрленине туйса илтĕм. Ăна çанă ăшĕнчен кăларма шутларăм, анчах вăл çав вăхăтра мана сăхма та ĕлкĕрчĕ. Пĕтĕм ўт-тир ыратса сăрăлтатса кайрĕ.

Эпĕ, халиччен кун пек япалана курманскер, алсана вĕлле айккине ывăтса ятăм, пуçа тăхăннă алана хывса çĕре пăрахрăм. Çапла тунипе пушшех инкеклĕ пулса тухрĕ. Пыл хурчĕсем мана пĕрин хыççăн тепри сăхма пуçларĕç. Ниçта кайса кĕме çук. Эпĕ, ним тума пĕлменскер, вĕлле айккинелле чупса кайрăм, çĕрулми йăранĕ хушшине тăсăлса выртрăм. Ман çинче пыл хурчĕсем çаплах сĕрлеççĕ, ĕнсе çине лараççĕ. Вĕсем мана хăйсен çуртне салатма пынă вăрă-хурах вырăнне хунă пулас, сывлама та памаççĕ: пĕрин хыççăн тепри сăхаççĕ. Пĕтĕм тĕнче кĕрленĕн туйăнать. Темле пулсан та, хам çĕр çумĕнчен хăпаймастăп. Пыл хурчĕсем вĕçсе кайса пĕтсен çеç эпĕ пуçа çĕклесе пăхма шутларăм. Пуç çаврăнать, ўт-тир пур тĕлтен те ыратать.

Аран-аран ура çине тăтăм та картишне чупса кĕтĕм, пусăран шыв ăсса, хуртсем сăхнă вырăна çума пуçларăм. Ўт-тир çаплах вут пек çунать. Ман пата анне чупса пычĕ те:

— Мĕн пулчĕ, ачам? — терĕ.

Хăй эпĕ çав тери тертленнине курсан, чăтаймарĕ, йĕрсе ячĕ.

Çав вăхăтра пирĕн пата Сахрун Мучи пырса кĕчĕ. Эпĕ хурт пăхнă çĕре çитсе курасшăн пулнă иккен вăл.

— Мĕн пулнă сана? — тĕлĕнсе ыйтрĕ Сахрун Мучи. Эпĕ ăна хам хурт пăхма пуçлани çинчен каласа пама тытăнтăм.

Сахрун Мучи мана калама чарчĕ те:

— Эпĕ сана пыл хурчĕсем тĕрлĕ



шăрша-марша чăтма пултарайманни çинчен каларăм-çке. Эсĕ çавна мантăн-им вара? — терĕ.

Эпĕ ăна: «Манран нимĕнле шăршă та кĕмест», тесе хутăм.

Сахрун Мучи çавăнтах ман умра çĕрте выртакан çĕнĕ алсана çĕклерĕ те сăмса патне илсе пычĕ.

— Акă, çак алсана шăршласа пăхха. Шăрши пур-и, çук-и? — терĕ.

Эпĕ тĕлĕнсех кайрăм: çĕнĕ алсаран чăнах та çăм шăрши кĕрет. Сахрун Мучи пăртак кулараххăн ман çине пăхрĕ те:

— Çавăнпа сан хуртусем хаярланса кайнă та ĕнтĕ, — терĕ.